ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

# Аваллăх управçисем

## Николай Мордвиновăн çурт-музейĕ

**«Маскарад», «Котовский», «Последний табор», «Парень из нашего города» фильмсенче тĕп рольсене выляса чапа тухнă Н.Д.Мордвинов артистăн çурт-музейĕ Етĕрне хулинче вырнаçнă.**



Музей 2008 çулхи çурла уйăхĕнче иккĕмĕш гильди купсин Дмитрий Семенович Мордвиновăн /артистăн ашшĕн/ икĕ хутлă çуртĕнче /ăна 1924 çулта конфискациленĕ/ вырнаçнă. Унта актерăн ачалăхĕ тата çамрăклăхĕ иртнĕ. Çурт ăшчикне Н.Мордвинов ӳснĕ вăхăтри сăн-сăпата кĕртнĕ. Тĕнчипе ырă ят çĕнсе илнĕ актер хăйĕн «пысăк сцена» çинчи çитĕнĕвĕсене шăпах ашшĕ килĕпе çыхăнтарнă. Кунта вăл пĕчĕк чухнех çемье оркестрĕнче, хор капеллинче, гитарăпа халăх юррисене юрланă.

Хальхи вăхăтра çурт-музейра Мордвиновсен çемйи куллен усă курнă япаласем, сăн ӳкерчĕксемпе документсем упранаççĕ. Тĕп экспозицире Николай Мордвинов пултарулăхĕпе паллаштаракан материалсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем театр тата кино артисчĕн, илемлĕ сăмах ăстин, театр режиссерĕн, Ленин тата Сталин /1942, 1949, 1951, 1965/ премийĕсен темиçе хут лауреачĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа кăтартаççĕ.